*Сăвă йĕрки – суха кассийĕн тăсăмĕ,*
*Рет-ретĕн ешерсе ларан калча,*
*Вĕри чĕрен хорей виçиллĕ пусăмĕ,*
*Хĕвел енне ал тăсакан ача,*

*Сăвă йĕрки – пин питлĕ çулçă çумăрĕ,*
*Чуна вăратакан çăлкуç кĕвви,*
*Чи хаклă çыннăн ĕмĕр кĕтнĕ çырăвĕ,*
*Таса юратăвăн хĕрӳ шевли...*

*Ю.Сементер*



# Юрий Сементере халалланă сăвăсем

*Эй, çĕршывăмăр, Чăваш енĕмĕр,*
*Аслă уйăмăр, аслă хирĕмĕр!*
*Эс саван пире, эс çĕклен пире,*
*Ырлăхне курма пил паран пире.*

# ЮРИЙ СЕМЕНТЕРЕ
# ХАЛАЛЛАНĂ СĂВĂСЕМ

Шупашкар
«Çĕнĕ Вăхăт»
2011

УДК 821.512.111
ББК 84 (2Рос=Чув) 6-5
Ю 71

**Юрий Сементере халалланă сăвăсем.** – Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2011. – 84 с.

Ку кĕнекене чăваш халăх поэтне Юрий Семенович Сементере халалласа тĕрлĕ вăхăтра çырнă сăвăсем кĕнĕ.
Ăна Николай Григорьевич Иванов (Микулай Мăскал) поэт хисеплĕ çыравçăн 70 çулхи юбилей ячĕпе пухса хатĕрленĕ.

© М.Мăскал, 2011



*Кама кăвак çутлах эп вăратăп? Хама.*
*Кама куç уçсанах эп ĕç хушап? Хама.*
*Йывăртарах çĕклем кама сунап? Хама.*
*Юлташăм такăнсан кама ятлап? Хама.*

***Ю.Сементер***

# ЮРИЙ СЕМЕНОВИЧ СЕМЕНТЕР
(кĕске биографи)

Красноармейски районĕнчи Танăш ялĕнче 1941 çулхи кăрлачăн (январь) 2-мĕшĕнче çуралнă.

Красноармейски вăтам шкулĕнче, Çĕрпӳ культура училищинче, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче пĕлӳ пухнă. Икĕ хутчен çар хĕсметĕнче тăнă. Çĕрпӳ районĕн хаçат редакцийĕнче, Чăваш кĕнеке издательствинче, 1974-2005 çулсенче «Ялав» журналăн тĕп редакторĕнче ĕçленĕ.

Юрий Сементер – чăваш халăх поэчĕ, 30 яхăн кĕнеке кăларнă. Вĕсенчен «Йĕс шăнкăрав» (1991), «Автан мĕншĕн авăтать» (1994), «Хурапа шурă» (1998), «Хуркайăк çулĕ» (2002), «Чăваш пики» (2002), «Çиçĕм сапаки» (2009), «Пайтул» (2009), «Ёмĕрсем параççĕ алă» (2010), «Кĕрхи вĕçев» (2010) халăхра уйрăмах анлăн сарăлчĕç. Ун сăввисемпе композиторсем 600 яхăн юрă кĕвĕленĕ. «Шуракăш» музкомеди, «Телей кайăкĕ» опера, «Вăрман ачисем» балет либреттисен авторĕ. Ытти халăх сыравçисен сăвви-поэмине чылай куçарать.

Нумай çĕршывăн (Украина, Беларуç, Таджик, Узбек, Болгари, Венгри, Германи, Туркмен тата ытти республикăсен) сыравçисем те пирĕн поэт хайлавĕсене хăйсен чĕлхисене куçарнă.

Туслăх орденне (1996), «Çарти хастарлăхшăн» медале (1970), тивĕçнĕ. Чăваш халăх поэчĕ (1999), Чăваш республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (1988), Çеçпĕл Мишши, Петĕр Хусанкай, Нестер Янкас, Фатых Карим ячĕллĕ премисен лауреачĕ.

# УМСĂМАХ ВЫРĂННЕ

Сăмах ăстисем пĕрне-пĕри сăвă çырса асăнмалăх парнелесси сĕм авалах йăлана кĕнĕ. Кунашкал кăмăл-туйăма эпир Пушкинпа Лермонтов пултарулăхĕнче те, Есенинпа Гумилев çырнисенче те тĕл пулатпăр, çав йĕркесене уйрăмах интересленсе вулатпăр. Чăнах та, хамăрăн Петĕр Хусанкай хăйĕн тусне Митта Ваçлейне, Митта Ваçлейĕ Ваçлей Давыдов-Анатрине, Ваçлей Давыдов-Анатри Геннадий Айхие, Геннадий Айхи Петĕр Эйзина халалласа çырнă йĕркесенче чăвашлăх туйăмĕ те, ăс-хакăл çиçĕмĕ те, çепĕçлĕх çеçки те пурин чунне те илĕртмелле ешерсе тăрать. Чăн-чăн поэзи тĕсĕсене куратпăр эпир Илле Тукташ, Иван Ивник, Алексей Воробьев, Мария Волкова, Геннадий Юмарт, Анатолий Юман тата ыттисем çырнă халал сăввисенче.

Хăйĕн ĕçтешĕсене парне сăввисемпе хавхалантарас туртăм чăваш халăх поэчĕн Юрий Сементерĕн лирикинче те курăмлă вырăн йышăнать. Ман шутпа, вĕсене пĕр çĕре пухса кăларсан калăпăшĕпе те, кăмăл-туйăм пĕлтерĕшĕпе те сулăмлă кĕнекех пухăнать. Черет çитсен, тен, поэтăмăр çав хайлавсене пĕр ярăма кĕртсе шăрçалĕ-ха, пире çав пуç кăшăль çыххипе савăнтарĕ. Халлĕхе вара манăн, Парнас тӳпемĕ умĕнчи ырă тăванăмсем, тĕрлĕ сăвăçсем пирĕн Юрий Сементере хисеплесе те чысласа, уявлă сăлтавсемпе саламласа çырнă сăвăсен кăшăлĕпе паллаштарас килет. Халал сăвви – ĕмĕр ешерекен поэзи йывăççин чи хитре çеçкеллĕ турачĕ, çиле авăсакан çуначĕ.

Çак халал хайлавĕсене вуласан маншăн тесен Сементер поэтăн сăнарĕ, унăн чăвашлăх тымарне упрас туртăмĕ, наци ӳнерлĕхĕн ăстисене пĕр эртеле пĕрлештерес кăмăлĕ çиеле тухса тăрать. Тен, сире те çавăн пекех туйăнĕ? Эппин, ырă вăхăт тĕлне пултăр!

*Микулай Мăскал*

02.01.2011

# ÇИТМĔЛ ÇУЛ ТУЛТАРНĂ ЯТПА САЛАМЛАНИСЕНЧЕН

* * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * *

Хисеплĕ Юрий Семенович!

Паллă юбилей ячĕпе сире чунтан-чĕререн саламлатăп. Тăван литературăра нумай çул хушши ăнăçлă ĕçлесе эсир жанр енчен пуян, ăсталăх тĕлĕшĕнчен пысăк шайпа философилле тарăн шухăшлăхпа паларса тăракан произведенисем çыртăр. Сирĕн лирика уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чăваш халăх поэчĕ, куçаруçă, тĕпчевçĕ, общество деятелĕ пулнă май эсир Республика пурнăçĕн аталанăвне кăмăл-сипет енчен курăмлă пайта хыватăр. Çамрăк ăрури çыравçăсене пулăшас туртăмăр та пысăк хака тивĕçлĕ. Тавтапуç сире ăнăçлă та тухăçлă ĕçĕрхĕлĕршĕн. Çирĕп сывлăх, çĕкленӳллĕ кăмăл, телей сунатăп. Пултарулăх анинче çĕнĕ ӳсĕмсем пулччăр.

Чăваш Республикин Президенчĕ
Михаил **Игнатьев**

Хисеплĕ Юрий Семенович!

Сире, чăвашсен хастар ывăлне, халăхăмăр поэтне çитмĕл çул тултарнă май тата Çĕнĕ çул ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Эсир нумай çул ырми-канми ĕçлесе тăван литературăра тата искусствăра тарăн йĕр хыврăр, ытармалла мар сăввăрсем, пурте кăмăллакан юррăрсем Тăван çĕршыва юратма, хаклама, илеме курма, шанчăкпа пурăнма, туслăха упрама вĕрентеççĕ, чăваш чĕлхине пуянлатаççĕ. Сирĕн иксĕлми пултарулăхăра чăваш халăхĕ, литературăпа музыка искусствин ăстисем пысăка хурса хаклаççĕ. Ырлăх-сывлăх, телей пултăр Сире, хисеплĕ Юрий Семенович, пултарулăх лаççинче малашне те тухăçлă ĕçлесе Чăваш еншĕн çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнӳсем тума ăнăçу сунатăп.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ
Михаил **Михайловский**

Хисеплӗ Юрий Семенович!

Йышӑнсамӑр культура ӗҫченӗсен юбилей саламне. Халӑхӑмӑр Сирӗн поэзири пултарулӑхӑра пысӑка хурать, тав тӑвать. Пултарулӑх ӗҫӗнчи ҫулӑр-йӗрӗр хисепе тивӗҫлӗ. Ҫутӑ талантӑрпа иксӗлми пултарулӑхӑра кура вулакансем сире юратаҫҫӗ, сума сӑваҫҫӗ. Пархатарлӑ ӗҫӗрте ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума ырлӑх-сывлӑх, телей, ӑнӑҫу пултӑр.

Чӑваш Республикин Культура министрӗ
Роза **Лизакова**

Хисеплӗ Юрий Семенович!

Сире ҫитмӗл ҫул тултарнӑ ятпа чун-чӗрери ҫӗкленӳллӗ кӑмӑлпа саламлатӑп.

Тӑван Красноармейски районӗнче Сире лайӑх пӗлеҫҫӗ, литературӑри пултарулӑхӑра та, общество ӗҫӗнчи хастарлӑхӑра та пысӑка хурса хакласҫӗ. Районӑн Хисеплӗ гражданинӗн тата Халӑх поэчӗн кашни сӑмахӗ пирӗншӗн сумлӑ та пысӑк пӗлтерӗшлӗ.

Ентешсем ячӗпе сывлӑх, телей, ӑнӑҫу сунатӑп.

Красноармейски районӗн
администраци ертӳҫи В.**Александров**

Хисеплӗ Юрий Семенович!

1977 ҫулта Украина писателӗсен съездӗнче паллашса туслашрӑмӑр та иксӗмӗр, ҫавӑнтанпа пӗрлехи туртаран тӑварӑнмасӑр туртса пыратпӑр Ҫеҫпӗл ӗҫне. Шанчӑклӑ, пултаруллӑ юлташӑмӑрсем пулӑшнипе Черниговпа Шупашкар ҫыравҫисем хушшинче туслӑх кӗперӗ йӗркеленчӗ, халӗ ҫав ҫула ҫӗнӗ ӑрусем ҫӗнӗ ӗҫсемпе такӑрлатаҫҫӗ.

Юра! Эпӗ Чӑваш ен ҫӗр-шывне тӑватӑ хутчен пырса ҫӳренисем, тӗлӗнмелле ырӑ та пултаруллӑ ҫынсемпе тӗл пулнисем, хамӑр патра санпа пӗрле ирттерме Турӑ панӑ вӑхӑтсем нихҫан та асран тухас ҫук.

Саламлатӑп сана, ыталатӑп сана пурнӑҫри паллӑ куну ячӗпе! Манпа пӗрлех тата ху ҫитсе курнӑ, тӑванла калаҫнӑ Чернигов, Нежин, Козелец, Остер, Бобровица, Пески, Сосница, Носовка, Ивановка, Новгород-Северский ҫыннисем те ӑшӑ салам яраҫҫӗ. Хапӑл тусам, тархасшӑн.

Пӗлсе тӑр: ҫил кирек хӑш енчен вӗрсен те эпир пӗрлех пулатпӑр. Ҫеҫпӗл пирӗнпе!

Украинӑри Наци ҫыравҫисен
Черниговри организацийӗн председателӗ
Станислав **Репьях**

Ҫӗнӗ ҫул ячӗпе пултӑр, хаклӑ Юрий абый Сементер! Эп хам та сан пекех хӗрӗх пӗрремӗш ҫулта ҫуралнӑ, анчах эсӗ манран тӑватӑ уйӑх аслӑрах, ҫавӑнпа эпӗ сана хамӑрӑн тутар чӗлхипе абый тесе хисеплетӗп, сана тӑван пичче вырӑннех хуратӑп. Мухтав Турра, эсӗ пурри чӑваш литературине тата пуянрах, тата илемлӗрех, тата шухӑшлӑрах та сӑнарлӑрах тӑвать. Антив эсӗ халӑху ҫине кӑларнӑ сӑмахсем ырӑ ахрӑм пулса чун-чӗрӳне таврӑнччӑр, ӗмӗрлӗх хавхаланӑва ҫаврӑнччӑр!

Лилийӑпа Ренат **Харисовсем**
Хусан хули

Хаклӑ Сементер пичче!

Астӑватӑр пулӗ, 2009 ҫулта, Ҫеҫпӗл Мишши ячӗллӗ библиотекӑра Ҫеҫпӗл Мишши ҫинчен ҫырнӑ сӑвӑсене халӑх умӗнче вулакансен конкурсӗнче Эсир мана, жюри председателӗ пулнӑ май, диплом панӑччӗ?

Чӑнах та, аслӑ поэтӑмӑр Ҫеҫпӗл ҫинчен, унӑн йывӑр шӑпи ҫинчен ҫырнӑ вӑрӑм сӑвва вуласси ҫӑмӑлах мар, кашни вуламассерен пӑлхантарать, чун хӗрлӗ хӗлӗх пек хӗрсе каять. Анчах чӑтмаллах, мӗншӗн тесен Эсир те ҫав йӗркесене чун витӗр кӑларнӑ вӑхӑтра пӑлханнӑ вӗтха, ҫапла мар-и Сементер пичче?

Халӗ ӗнтӗ эпӗ пӗрремӗш класа кайрӑм, тӑрӑшса вӗренетӗп. Сирӗн «Чӑваш халӑхӗн икӗ ывӑлӗ ҫинчен ҫырнӑ икӗ халап» сӑввӑра уявсенче час-часах вулатӑп, малашне те вулӑп. Антив, пурте пӗлччӗр Константин Ивановпа Ҫеҫпӗл Мишши пек паттӑрсем ҫинчен.

Тавтапуҫ Сире.

Руслан **Уразаев**
Шупашкар хули
35-мӗш вӑтам шкул

# ХАЛАЛ СӐВВИСЕМ

* * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * *

## ЮРИЙ СЕМЕНТЕРЕ

Çак ĕмĕр пĕтĕмпех хура та шурӑ,
Тӑратпӑр, акӑ, ĕмĕр вĕçĕнче,
Тем-тем курса тем-тем чӑтсан та, Юра,
Пире çапса хуçмарĕ çут тĕнче.

Хури-хурах. Çак çĕр çине килсессĕн
Сӑпка юрри илтмерĕмĕр санпа,–
Пире пӑвса тӑкас тесе çиллессĕн
Тӑшман çуйхашрĕ урмӑш сасӑпа.

Шурри-шурах. Хĕвеллĕ ӑраскалӑн
Пире валли те çитрĕ ыр хĕлхем–
Хӑйсем пĕтсен те, йӑх юнне тӑсмалӑх
Пире çӑлса хӑварчĕç аттесем.

Кайран санпа ӑнлантӑмӑр–тĕнчемĕр
Хура та шурӑ çеç те мар иккен.
Курма пĕлсен–пĕр вĕççĕр ун илемĕ:
Кӑвак та ешĕл, йӑмӑх та кĕрен...

Курма, илтме пĕлсессĕн, çутçанталӑк–
Пин çутӑллӑ, пин кĕвĕллĕ илем,
Çавна куллен çынна астутармалӑх,
Çав илемпе чуна савӑнтармалӑх
Çут тĕнчене килеççĕ поэтсем.

***Порфирий АФАНАСЬЕВ***

1999 çул
Нарӑсӑн 26-мĕшĕ

# ПОЭТ ЧЁРИ

*Юрий СЕМЕНТЕРЕ*

«Поэт чĕри», «Поэт чĕри», «Поэт чĕри», теетпĕр...
Мĕскер-ха вăл – Поэт чĕри?
Пĕлместĕр-и?...
Пĕлместĕр.

Мĕскер-ши вăл – Поэт чĕри?
...Эп хам та йăлт пĕлместĕп.
Анчах шутлатăп:
ырă вăл.
Таса вăл.
Çутă-çутă.
Черченкĕ вăл.
Айван.
Ансат.
Тата – вĕри «Хĕвел пек».
Тата – кăра «кăра чухне»–
Тĕнче Пăлхавĕ евĕр.
Тата – вăл пысăк «Çут тĕнче
унта йăлт вырнаçать-тăр».
Мĕн, ахальтен-им
ыттисем
туйманнине
туять вăл?
Мĕн, ахальтен-им
вăл ялан
пуриншĕн те
яваплă?
Мĕн, ахальтен-им
Поэтсем
вилсессĕн те
пурнаççĕ?
«Поэт чĕри», «Поэт чĕри», «Поэт чĕри», теетпĕр...

***Валери ТУРКАЙ***
10.05.1994
«Турă питĕнчи куççуль»
кĕнекере пичетленнĕ

* * *

*Юрий СЕМЕНТЕРЕ*

Ӗнер кăна эп сăвă çыраймастăм.
Ӗнер кăна ман чун хӗлӗхӗсем
Тархасласан та сасă кăлармастчӗç,
Çиçместчӗç манăн пушă куçăмсем.

Ӗнер кăна эп сӳннӗ кăвайт евӗр
Хупланнăччӗ сив тунсăх кӗлӗпе.
Ӗнер хӗвел те маншăн çутă марччӗ.
Лараттăмччӗ эп тăлăх-турат пек.

Паян вара вут-хӗм сапать ман чунăм!
Паян вара чи чаплă юрăç пек
Юрлатăп эпӗ – ывăнма пӗлмесӗр,
Юрлатăп эп – чунпа та чӗрепе!

Юрлатăп эп – эп Пурнăçа мухтатăп!
Юрлатăп эп – çут тӗнчене савса!
Çук, кирлӗ мар пуçа усса лармашкăн!
Пурăнмалла – савса та савăнса!

Пурăнмалла – ирпе хӗвел тухнишӗн
Турра чунтан ăшпиллӗн тав туса!
Пурăнмалла – хӗмленнӗ чух чӗремӗр!
Пурăнмалла – малтан-мала утса!

Ӗнер кăна эп сăвă çыраймастăм.
Паян вара вут-хӗм сапать ман чун.
Мухтав сана – ман Юррăм, ман Çунатăм!
Мухтав сана – хӗвеллӗ Çутă Кун!

***Валери ТУРКАЙ***

16.04.2010

## ÇĔН ĔМĔРЕ ПĔРЛЕ КĔРЕР

*Юрий СЕМЕНТЕРЕ*

Маттур юлташăм Сементер,
Чун хавалне хĕмлентерер,
Тăванлăха çуллен çĕклер,
Çĕн ĕмĕре пĕрле кĕрер!
Ешертĕр савнă Чăваш ен,
Çунар-и уншăн чĕререн,
Атте-аннемĕр парнине,
Тăван чĕлхемĕр хăватне,
Сӳнми хĕвеллĕ илемне
Çӳл тӳпене çити çĕклер,
Ыр шухăш! Уншăн пĕрлешер!
Сăмахăм вăрăм, ан кӳрен,
Ан тух эс халăх пилĕнчен,
Ан пис пиртен, тусусенчен...
Юрра пуçлар-и санпалан,
Янра, «Уçланкăри палан»!
Кĕрлетĕр пирĕн кĕреке,
Сар кайăк вĕçтĕр ирĕке,
Тăван поэтăм, Сементер,
Чăваш çĕрне илем кӳрер!

***Васлей ДАВЫДОВ-АНАТРИ***

Чăваш халăх поэчĕ, Раççей культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ
Митта Васлейĕ ячĕллĕ преми лауреачĕ

1999

# ЮЛТАШĂМ!

Эс çумри çынсене ыр сунан,
Эс çумри çын валли çул уçан,
Çавăнпа та, тăванăм, ялан
Санпала пĕрле чух пит аван.

Чĕлхӳпе – чĕкеçле чĕвĕлти,
Сăмахху санăн – тулă кĕлти,
Çурхи ăшă хĕвел шевли пек
Туйăма çавăратăн эс тек.

Çавăнпа сан хитре йĕркӳсем
Кĕвĕ евĕр сапаççĕ хĕлхем.
Ахаль мар, Сементер, яланах
Ху патна эс туртатăн мана.

*Иван АРШИНОВ*

03.11.1974

Пĕлсе тăма: Сементерпе
Аршинов композитор
иккĕш пĕрле 20 юрă,
икĕ сюита çырнă

* * *

Вĕсен – хваттерĕнче те халăх,
Пасар пек халăх пахчинче,
Хăçан кăштах канать-ши алăк
Тесе шутлан çак кил çинчен.

Кунта эс Туркая куратăн,
Час-час куратăн Хариса,
Хăш чух çич сăвăç – çил çунатăн–
Кĕреççĕ çиччĕн харăсах.

Мунчи – чăвашăн ыр ыначĕ–
Чашлатчĕ шăматкунсенче,
Элли тĕреклĕн çапăнатчĕ
Ик милĕкпе лапка çинче.

Кунта хăш чух юрлать Заломнов,
Хăш чух Ревель килсе ларать,
Çыран çăки те сумлăн, танлăн
Пахча карти урлах пăхать.

Иккен, поэзи шăплăх мар вăл,
Вăл пурнăç чĕлĕхĕ иккен.
Вăл ĕç, вăл шухăш, çапнă савăл,
Чун çунатти, тепĕр тесен.

*Сергей САМАНТАШ*

10.09.2010

# СЕМЕНТЕР!

Эсĕ калашле, чăнах
Ик уяв пĕрле килеççĕ,
Савăнма сăлтав пурах:
«Çылăх мар сыпма та»–теççĕ.

Анчах, шăллăмçăм, вĕсем
Пĕр килни кăçал кăна-çке,
Шавлăн çаврăнса килсе
Чунсене çунат хушаççĕ.

Пирĕн туслăх кунсерен
Тăтăрччĕ кӳрсе хаваслăх!
Шанчăк пур-ха чĕрере,
Сывă пултăр çеç пуласлăх!

***Александр ГАЛКИН***

1989

## ПАРНЕ

Тăван Сементере çуралнă кун ятне
Тăванлăх йĕркипе кӳресшĕн эп парне.

Поэт вăл – çунакан, вăл – сăвă туптакан,
Пегас тесе ăна парасшăн эп такан.

Ан такăнтăр поэт, ан шутăр ун ури,
Ан хуçтăр ун чунне пурнăç хури-шурри.

Такан вăл пулăшать ĕçре, вăрăм çулра,
Вут-хĕм вăл кăларать, сыхлать вăл усалран.

Упратăр поэта эп тунă йĕс такан,
Сыв пултăр сăмахпа чун шайĕ паракан!

***Анатолий ТАКАН***
Çĕрпӳ районĕ
Такана ялĕ

1999

* * *

Чи йывăр чух кăна туйма пуçлатăн
Кам камĕпе ун кăмăл-туйăмне.
Хăш чух пурна пĕлмерĕм пулĕ латлăн–
Анчах манмарăм Сементер камне.
Мĕн калăн, эс поэт та, дипломат та,
Хăш чух пиртен пин хут та чеййерех,
Эп сан патна пыраттăм пурпĕрех,
Эппин, пĕлеттĕн эсĕ сумлама та...

***Василий ЭНТИП***

02.08.1989

## ПĔЛЕС ПУЛСАН

*Юрий СЕМЕНТЕРЕ*

I

Пĕлес пулсан – тесе
Чееленетпĕр,
Мĕскер тусан
Мĕн пуласса пĕлетпĕр.
Кам умĕнче,
Камран хӳтĕленетпĕр,
Е хамăр – хамăра
Куçран витлетпĕр?

Ĕç-пуçшăн ĕççинче
Çине тăратпăр,
Калас килейнĕ
Сăмахах калатпăр,
Утма паман çулпах
Танклаттаратпăр,
Ытахальтен-им
Çамкана вататпăр?

Ватсассăн та–
Нĕшĕклесе лармастпăр,
Ӳксессĕн те–
Тапкаланса выртмастпăр.
Çын ретĕнче
Çын ретлĕ пурăнатпăр,
Этемлĕхе кĕретпĕр те–
Тухатпăр.

II

Çырма юхать,
Авкаланса чупать-и,
Хыпалансах
Хитре сукмак хывать-и?
Пĕри – пĕве кӳлленчĕкне
Тулать,
Тепри – мăнаçлă тинĕсре
Шавлать.
Кун-çул та çапларах
Тăскаланать,
Тумхахсăр, тӳрĕ çул–

Сайра пулать.
Кĕтетпĕр, ĕненетпĕр,
Тăрмашатпăр,
Хĕн-хур картисене
Ишсе вататпăр.
Хĕлхемĕн çуталса
Çиçсе илетпĕр,
Элчел çитет те–
Анăçра çĕтетпĕр.

III

Пĕтетпĕр-и эпир унта?–
Пĕтместпĕр,
Юман хăрать-и?–
Хунавне тивместпĕр.
Ĕмĕтсене ĕçсем
Çунат параççĕ,
Çутă е Тĕксĕм
Сăрăпа сăрлаççĕ.

Ваклас килмен
Самантсене ваклатпăр,
Каятпăр, тасалатпăр–
Таврăнатпăр.
Тепре таврăнмасса та
Пултаратпăр,
Ăна – пурнан
Пурнăçранах чухлатпăр.

IV

Ăçта çитетпĕр–
Чун йăлтах пĕлет,
Çулне – Тӳпе-аттемĕр
Тĕрĕслет.
Аннемĕр – Çĕр
Амаланса тăрать,
Вăл пирĕнпе
Аталанса пырать.
Пăхать пире, усрать,
Тăрантарать,
Пире валли пирех–
Тăпра тăвать.

Йăли-йěрки явапла–
Пăхăнатпăр,
Çут тěнчепе
Асаплăн уйрăлатпăр,
Мěн-ма-ши хăш чухне
Пуçтахланса,
Хурăнташпах харкашăнса
Пурнатпăр?

Пěр çулăк çылăх–
Тăхăр чан чěртме
Ытлашшипех çителěклě!–
Йăслатпăр.
Тăванпала тăванлă
Пурăнма
Пěлместпěр-им?
Мěн-ма курнăçланатпăр?

V

Тӳрккес пулас килмест,
Тус-пěлěшěм, каçар.
Кӳренěвне шала
Шӳте те ан куçар.
Килех, вăртах, тавах,
Вырнаç та юнашар–
Тав куркине çěклӳçěн
Пěр чěлхепе уйлар.

Лере те – çирěп, туслă
Ентешлěх ăруласчě,
Унта та пěр сěтел
Таврах пуçтарăнасчě,
Сăваплă Сарă Кун
Тěнчин кěрекинче те–
Чăваш юррисенех
Шăрантарса юрласчě.

*Светлана АСАМАТ*

1999

## ÇĔНĔ ÇУЛ САЛАМĔ

Çĕнĕ çул – çĕн кĕнеке,
Эсĕ – унăн авторĕ.
Йывăрăш – пĕр кĕренкке,
Тата хушăнсах тăрĕ.

Туйăмпа çыратăн-и,
Е вăйпа ăна тĕртен,–
Сăвăç мĕн калас тени
Ӳсĕнсех пырать хуллен.

Чи чапли – туять чĕре–
Эсĕ халь çырма ларни.
Хайлаву тăван çĕре
Пултăр санăн чун парни.

***Анатолий ЮМАН***

Чĕмпĕр, 1986

## САЛАМСЕМ

Ĕпхĕве хам ĕçпеле кайсассăн
Кĕтĕм «Агидель» редакцине.
Калаçаççĕ пушкăртсем хавассăн,
Хисепе хурса чăвашсене.

Тав туса сывпуллашма тăрсассăн,
Чим-ха, терĕ, «Агидель» хуçи,–
–Сементер патне, хăнам, тархасшăн
Çитерсем ыр кăмăл хутаççи...

Хусанта та «Иделе» эп кĕтĕм,
Кĕтсе илчĕç сумлă йĕкĕтсем.
Кĕç çапать те уйрăлас сехетĕм–
Чим, тăхта-ха, теççĕ хайхисем,–

Хăвăр Шупашкарăра çитсессĕн
Сементер пиччемĕре курсан,
Пит аванччĕ çывăххăн, сипетлĕн
Юбилей саламĕ каласан...

Ижевскра та çав майлах тиерĕç,
Хушрĕ çула май Йошкар-Ола,
Тĕрĕс-тĕкĕл çитерсемччĕ, терĕç
Сунăма шур Шупашкаралла...

Туслăх çăкĕпе аван çитейрĕм
Пичет çурчĕн саккăрмĕш хутне.
Йышăнсам, хисеплĕ Сементерĕм,
Тăвансен саламĕн миххине!

***Константин ПЕТРОВ***

29.12.1995

# ШУПАШКАРА КИЛТЁМЁР

Шупашкара килтёмёр,
Сементере куртăмăр,
Чăваш сăри ёçрёмёр,
Чăвашла юрларăмăр.

Шупашкара килтёмёр,
Сементере куртăмăр,
Пултран яшки çирёмёр,
Пултаруллă пултăмăр.

Шупашкара килтёмёр,
Сементере куртăмăр,
Атăл хёрне çитрёмёр,
Атăл вăйне туйрăмăр.

Сементерсем, Пурхисем,
Ёпхёве те çитёрсем!
Çёнё кăмăс ёçёпёр,
Туркайпа вăй виçёпёр!

***Асхаль АХМЕТ-ХУÇА***

Ёпхӳ, 19.01.1991

# ТАВАХ!

Эп Анкара хулинчен
Килсе çитрĕм Турцирен,
Пурăнтăм Шупашкарта
Пархатарлă вырăнта.

Сементерсем патĕнче
Пултăм эпĕ хăнара,
Сарлака сĕтел çинче
Тем те çирĕмĕр вара.

Ырă çынсен хӳттипе
Эп вĕрентĕм чăвашла,
Икĕ пăт кĕнекепе
Халь каятăп каялла.

Хамăр тăвансем пекех
Килĕштертĕм эп сире,
Манмăп ку çула текех,
Туслăх пытăр ĕмĕрех!

***ИБРАГИМ***
Анкара университечĕн
чăваш кафедрин пуçлăхĕ
06.12.2009

# ТУСАЙ ЯЛЁНЧЕ

Витере, кашта çинче,
Шурă чăхсем лараççĕ,
Тусай ялĕн клубĕнче
Кинемисем лараççĕ.

Мĕн тăваççĕ карчăксем?
Çĕн кĕнеке вулаççĕ,
Сăвăсем вуланăçем
Çамрăкланса пыраççĕ,

Сементер юррисене
Харăс юрласа ярсан
Кинемисен чĕрине
Хĕр ĕмри килет тaçтан.

Ватлăхне ăçта хурас?
Хăварас ăна клубра,
Çамрăклăха таврăнас,
Ватлăх – вырăнсăр тупра.

Сементер те хулара
Пурăнтăр, ан ватăлтăр,
Ун çăварĕнче вара
Пĕр шăл та ан катăлтăр.

***В.Я. ЕФИМОВА***

Красноармейски районĕ
Тусай ялĕ, 2003

## ЮРИЙ СЕМЕНТЕРЕ

*Сементер – юмахри феникс кайăк, вăл хăйне вутра çунтарса яма, кайран хăй кĕлĕнчен чĕрĕлсе тăма пултарать.*

Азербайджанларан

Сементер – асамлă кайăк:
Хăй пĕтсессĕн те çунса,
Чĕрĕлсе тăма пур майĕ,
Кайĕ вăл çунатланса.

Чăвашра пăртакçă пур-тăр
Çавăн пек сӳнми хăват...
Ту енче ларатчĕ çуртăр–
Тăват енĕн çил хăвать.

Терт-хĕне тӳсме пĕлнишĕн
Танлăх пурччĕ сăнунта,
Нăйкăшмастăн эсĕ нишлĕн,
Ху выçах пулсассăн та.

Чун асапĕ, çын инкекĕ
Хывăнать сăвва-юрра.
Хушăран-и савнăç лекĕ–
Хĕпĕртен хăвна кура.

Пӳрнĕ пурăнăç телейĕ
Çичĕ хут вара паха.
Купăс тытăн – вăл пĕлейĕ
Йыхăрма ыр сăмаха.

Шетмĕ ен ĕçченĕ çеç-и,
Пур çĕрти чăваш çынни
Юррунта халь сăн илеççĕ,
Вĕсенче – чĕре çунни.

Алăра пурин те пирĕн
Хамăра кура ялав.
Пăрахмасть пĕри каç-ирĕн,
Теприне пусать юлхав.

Ялавпа утса пырать-и–
Аякран пăхма ансат.
Тĕрлĕ çил ăна аптратĕ,
Ӳппĕн-тӳппĕн çаврăнса.

Калаçма эпир чăлах-им?–
Кашниех ăста, хастар.
Чăнлăх-тĕрĕслĕх сăмахĕ
Имшертен çук пархатар.

Шаннă ĕмĕт çитмесен те,
Вăл кайсан та харама,
Чĕрĕлме тӳр килтĕр ĕнтĕ
Ӳлĕм пирĕн тăхăма.

Çын чунне çемçетĕ çынлăх,
Çынлăх – ют суялăха.
Çакă пултăр пирĕн чăнлăх,
Вăл пистермĕ халăха.

*Геннадий ЮМАРТ*

1990, раштав

* * *

*Юрий СЕМЕНТЕРЕ*

Пулмасассăн санăн пахчунта
Кăмăл уçах мар, темскер çитмест.
Калаçса ларма мĕнпур чунтан
Тата кĕç мунча хутса кĕме
Пултаратпăр кил-йышпа унта.

Çинĕ тейĕн пылпала кулач–
Кунти сывлăш хăй çапла-тăр çав,
Хĕвел ырă мăшăр пек кулать:
Пахчара эпир кăна хуçа,–
Нимĕн те пăсаймĕ кăмăла.

Хуранта какай шӳрпи пиçет,
Ыр кӳрше вăл йыхăрать килме,
Пулăштух сĕтел çинче кĕтет:
«Çылăх мар пĕрер черкке ĕçме...»

Ĕçпе шӳт хуçаланать йышра,
Вырăна ларать ĕшеннĕ чун.
Çакă хĕсĕкленнĕ пурнăçра
Телейпе иртсе каять пĕр кун.

Тавтапуç сан чыслă пахчуна,–
Ӳстĕр улмуççи, чие, палан.
Юрăç кайăксен кĕвви чуна
Тăтăр хăватне парса ялан.

***Георгий ЕФИМОВ***

23.04.1998

## ХЁЛЛЕХИ САЛАМ

Шап-шурă юр ӳкет çӳлтен,
Асилтерет вальс ташшине.
Хĕллен илемĕ пур иккен,–
Чунсем вĕçеççĕ тӳпене.

Епле хитре сан палану
Çырли çĕре тăкăнманран.
Кун пек хавраслă йăпану
Пурăнăçра пулмасть ялан.

Эх, Сементер, эх, Сементер,
Йăл-йăл кулса пар аллуна,
Савăнăçа эс ан сӳнтер,–
Вăл кĕтĕр çирĕп йăлана.

Санпа пĕрле ман чĕрене
Хыпса илет-çке çиçĕм-вут.
Е вуласан сăввусене
Илтес килет чăнах пин хут.

Ёнен мана: юррусене
Юрлап ăçта пулсассăн та.
Вĕсем вĕçеççĕ тĕнчене,
Яраççĕ туйăма ăнтан.

Суймастчĕ Асатте нихçан,
Çыратчĕ шухăша пĕлсе,
Сана ахаль вăл каламан
Есенинпа тăван тесе.

***Валериан АШКЕРОВ***

Тутарстан, Пăва районĕ
Элшел ялĕ
2010 çул, раштав

# ÇĔКЛЕНТЕР ТЕ ХĔМЛЕНТЕР

*Чăваш халăх поэтне*
*Юрий СЕМЕНТЕРЕ*

Сементер тесессĕн, Юрий,
Чăн поэт куç умĕнче.
Çумăр-и, тĕтре-и, юр-и–
Пур пĕрех хитре тĕнче.

Сан ăсталăх çакă мар-и:
Йĕркерен мерчен-ахах.
Вулакан – вăл хĕр-и, ар-и,–
Хăй валли тупать сăмах.

Вăхăт чуптăр-и васкавлăн–
Эс ан парăн, Сементер.
Сăввупа чуна çунатлăн
Çĕклентер те хĕмлентер.

***Аркадий КАЗАНОВ***

2002

# СЕМЕНТЕР КАÇĔНЧИ АЛАВЕРДИ

Ырă тусăм Сементер,
Чĕре юррине итлер.
Акă мĕн юрлать чĕре:
Хисеплетĕп, тет, Сире.

Хисеплетĕп те саватăп,
Юратса çапла калатăп:
Хĕл те çу каçа-каçа
Пурăнар-ха пурнăçа.

Таврана тĕлĕнтермелĕх
Сементерĕн пур хевтелĕх
Селĕм сăвă çуратма,
Çепĕç юрă шăратма.

Çу чĕлхе те пыл чĕлхе
Тивет чунри хĕлĕхе,
Итлекен халăхăнне
Çĕклентерет кăмăлне.

Сементер, екки ярсан,
Кĕреке пуçне ларсан,
Черккине тытас килет,
Тĕппипе ĕçес килет.

Юррине юрлас килет,
Ташшине ташлас килет,
Çумра ларан пикине
Ăш сăмах калас килет.

Сăмахпа та юмахпа,
Чун варринчи ахахпа
Хĕм кăларма пĕлекен
Тем те тăваять иккен!

Çавнашкал вăл Сементер:
Уявсенче – эльтепер,
Кăмăлшăн – çемçе минтер,
Тăшмансемшĕн – чăн нӳкер.

Пурăнар-ха, Сементерĕм,
Пархатарлăн та чиперрĕн,
Малашне те, хальхи пек,
Пăрăнтăр пиртен инкек.

Çĕр çаврăнать – çаврăнтăр,
Улма йывăç авăнтăр,
Сан сăввуна вуласа
Тăван халăх савăнтăр.

Шупашкар та Шемертен
Халь кĕтет Сементертен
Яш тĕнчене чĕнекен
Тепĕр хӳхĕм кĕнеке.

Çав «Уçланкăри палан»
Чĕрере янранăран
Юрату ытамĕнче
Пурăнас килет ялан.

Кăнтăрла та çĕр хута
Çыртăм эпĕ çак хута
Мускаври йăваш чăваш,
Санăн шанчăклă юлташ,
Сан вăйна ĕненекен
Авăнми Афиноген.

*Афиноген КУЗЬМИН*

Мускав хули
2008

## ÇĔРШЫВ АЧИ

*Юрий СЕМЕНТЕРЕ*

Çĕршыв ачи вăл – çĕр çынни: ан ман!
Ăна пула утса çӳретпĕр хăтлă.
Çĕршыв ачи вăл – хурăн та юман,
сĕм вăрманти упасариллĕ шăплăх.

Ан чуп Платон патне, Сократ патне
çакна пĕлме эс: чăн чăваш ăс-халĕ
сарман-и хăйĕн кăйкăр çунатне
аваллăхран?
Вăл хăй те шур сухаллă!

Апла пулсан, тĕнче асамлăхне
ăс-тăнлă чăвашсем тĕпчеççĕ çирĕп.
Чăн-чăн чăваш çеç хаклĕ хăй йăхне,
вăл хăйĕн тĕнчипе калаçĕ ирĕк.

Эп халăха хура вăрманпала
танлаштаратăп тепĕр чух.
Ӳркевсĕр
хунать вăл йывăç пек – чакмасть, паллах:
пĕрне кассан, тепри ӳсет ӳпкевсĕр.

Чăваш çав тертлĕ пурнăç йывăçне
шăварĕ куççульпе, йăхне вăй парĕ.
Эпир манман-ха несĕлсен ăсне,
вучахсенче – асаттесен кăварĕ.

Çĕршыв ачи вăл – йĕплĕ талпиçен:
ан кул! Чечек çурсассăн вăл та
çĕре илем кӳрессине сисен:
чечекĕсем пăхаççĕ чăлтăр-чăлтăр.

Шел!
Лапчăтать паян прогресс утти
час-час чĕрчунсене те уямасăр.
Ĕнтет чечексене те ун вутти:
ăçта халь лантăш? Ма çухалчĕ сассăр?

Прогресс тени вăл пăлтăр-пăлтăр кĕл
пулса çухалчĕ мар-и ним йыхравсăр?
Ма сăмахпа пеместпĕр тӳррĕн, тĕл?!
Усал ăса та каçаратпăр шавсăр.

Çав хушăрах пăраççĕ шухăша
чăн çулĕнчен ăçтиçуксем сăвапсăр.
Шухăшласассăн вут хыпать ăша,
нишленнĕ чун ытла та сумсăр, чапсăр.

Пире вĕрентнĕ шăппăн çӳреме
вăрçа пула минренĕ шух ачалăх.
Тен, шухă та пулман эпир?
Темме
пăхатпăр хамăр вăхăта халь чалăш.

Кама вăрçас? Çак айăп хамăртан
килмен-çке пурпĕр?
Аслă çутçанталăк
хаваслăн тасалсан юртан, пăртан,
хăй çăтмахне кĕме уçатчĕ алăк.

Вара эпир пач маннă хурлăха,
вăрмансенче кашлич татса çӳренĕ.
Çын тивлетне сума сăван йăха
хăшсем час-час «айван!» тесе сивленĕ.

Çил ачипе ăмăртмалла хăш чух
сухаллă çăпата сырса хаваслăн
Трак пасарне анман-и эс?
Е çук?
Аннах, тăванăм. Асилӳ мăн саслă.

Вăл кăшкăрать çулсен чăтлăхĕнчен,
вара «А-у!» тесе чупатпăр хамăр.
Çак саманан хура аварĕнчен
эпир те тухнă.
Курнă тĕрлĕ тамăк.

Çĕршыв ачи вăл – хурăн та юман,
сĕм вăрманти упасарриллĕ шăплăх.
Асту: эпир вĕсемсĕр çын пулман!
Çакна халь асилсе ларма та хăтлă.

Ан чуп Платон патне, Сократ патне
ăс-хал ыйтмашкăн.
Тăрăшса шырар-и
асаттесен пӳрт умĕнчи сакне?
Тен, ватлăх философин тĕп тымарĕ?

***Николай ТЕВЕТКЕЛ***

25.03.1994 ç.

«Илем» хаçат
17.05.1994 ç.

# ТАНĂШ ЯЛĔ ТĔЛĔНЧЕ

*Юрий СЕМЕНТЕРЕ*

Сан енре çӳрӳçĕн пĕлтĕр
Пĕлтĕм çакă чăнлăха:
Тухаймастăн ялу витĕр,
Ял сан витĕр хăй тухать.

Хăтлă ялăр ячĕ – Танăш,
Йăмрисем – килти майлах,
Кам пĕлет, шăпах, тен, тантăш
Эп çуралнă ялпала?

Ачисем пулсассăн туслă
Туслă мар-и ялĕсем:
Пурнăçра пĕр пуслăх пуснă
Иртнĕçемĕн ĕмĕрсем.

Танăшу сана палларĕ,
Кĕтрĕ эсĕ юласса,
Ытамне тăсма васкарĕ
Çул çине чупса тухса.

Ху та эс кĕресшĕнччех-тĕр,
Анчах пирĕн – каймалла,
Йыш çинче, аван пĕлетпĕр,
Йыш ĕçне пăхăнмалла.

Ал сулса ялу ăсатрĕ
Шупашкар курăниччен,
Чĕрӳне, сисеп, пăлхатрĕ
Ешĕл тумлă униче.

Эп пăхма аванмарлантăм
Икĕ хăмăр куçунтан,
Пĕр сăмахсăр эп ăнлантăм
Çавăн чух сана чунтан.

Çурмалла, эппин, пайлар-ха
Хамăр тунсăх туйăмне,
Ăнланап: хĕвеллĕ аркă
Ял сарать чĕрӳ умне.

Шухăшна аван вăлтатăп,
Эп илтетĕп: аякран
Ан çухал, тесе мана та
Тăван кил пăхать куçран.

*Роберт МИННУЛЛИН*

Тутарстан халăх поэчĕ

1984

## ЭСĔ ÇУТРĂН ÇУТĂ ÇĂЛТĂР

Паян уяври пек хаваслă Танăш,
Салам ăшши пур кăмăла çĕклет.
Сана чыслать ялйыш, юлташ та тантăш:
Телей, ыр кун та ăнăçу пиллет.

Тăван уй-хир, çаран та Шетмĕ шывĕ
Асамлă вăй та тӳсĕм панăран
Поэзи пахчинче ĕçлетĕн сыввăн–
Салтак пек шикленмесĕр чăрмавран.

Хаçатçăра эс пултăн пултаруллă,
Тăкатăн тар «Ялав» сакки çинче.
Сăвву-юрру чунра чĕртет вут-çулăм,
Вĕçсе тăри те шăпчăк пек инçе.

Художник, композитор та тăлмачă
Хываççĕ куç хитре хайлавсене.
Куллен каратăн туслăх асамачĕ,
Пĕрлештерсе вĕри чĕресене.

Ентешĕм! Еткерӳшĕн савăнар-и
Мухтавлă юбилей кĕрекинче,
Вулаканпа пĕрле хавхаланар-и
Эс çутнă çутă çăлтăр айĕнче!

*Юрий ВИРЬЯЛ*

12.01.1991

* * *

*Юрий СЕМЕНТЕРЕ*

Кармашăн-и е ăнтăлăн–
çул-йĕр тип-тикĕс мар шавах.
Тепле çитмен çав тăн-тăнлăх...
Каçарнăшăн сана тавах.

Вĕçес тесеттĕм тăвăллăн,
анчах лăш усăнчĕ çунат.
Ӳпкевлĕн пăхрăн, тăвăнтăн
чакнишĕн чунăмри хăват.

Эс тăвăнтăн та йыхăртăн–
вĕçевĕм тăсăлать каллех.
Пĕр çăмăл та, пĕр йывăр та...
Тĕллевĕм тӳрĕ: вĕçмелле!

Тавах, манми тăванăмçăм,
тавах – каçарнăшăн çеç мар:
халь ĕмĕтĕм-çунатăмçăм–
кăкăрăмри сӳнми кăвар.

***Борис РОМАНОВ***

17-20.07.1981

* * *

*Юрий СЕМЕНТЕРЕ*

Каллех пакун çакасчĕ, ыр тетеçĕм,
Хитре тумпа япшарланас килет.
Пăшал тытман арçын арçын-и теççĕ,
Салтак ятне чăваш ялан çĕклет.

Салтак тесен хĕрсем вилсех каяççĕ–
Чечек пекех тухатчĕç полк умне.
Ман патăма пĕр çиччĕшĕ çыратчĕ–
Сӳнме памаççĕ асăмçăм вутне.

Салтак туссем, вунçичĕ халăх чысĕ,
Çаплах чунра, укаллă альбомра.
Анчах çарта тăрать халь урăх ӳсĕм–
Яшсем çӳреççĕ вĕççĕр вăрçăра.

Текех пакун ай çакас мар, тетеçĕм,–
Ку ĕмĕт юлтăр тĕлĕкре кăна.
Салтакăнни пек сумлă халь те ĕçĕм:
Умра выртать тумхахлă шур ана.

Чипер хĕрсем текех мана ан савччăр–
Чи çепĕç сăввăм вĕсене валли.
Сив пăшал мар, алран ача ан кайтăр,
Нихçан ан сӳнтĕр арăмăм кулли.

Текех пакун ай çакас мар, тетеçĕм.

***Анатолий ЫХРА***

1993

«Çырусем» кĕнеке, 2001

# ЮРЛАТЬ САРКАЙĂК ПĔР КАНМАСĂР

Ирхи шуçăмпала тухатăп
Анис улмийĕн пахчине,
Итле-итле эп савăнатăп
Садри саркайăк юррине.

Çавра Çавал хĕрне анатăп
Тапса тăран çăлкуç патне,
Савни сасси пекех тăнлатăп
Хитре саркайăк юррине.

Çава илсе уя тухатăп,
Çулатăп ухлĕм утине,
Паккус айне хурса пыратăп
Умри саркайăк юррине.

Ăш çумăр çунă чух сăнатăп
Çӳлте кĕпер тĕрленнине,
Çунатлă кăмăлпа юрлатăп
Çумри саркайăк юррине.

Юрлать саркайăк пĕр канмасăр
Савса чăваш тавралăхне,
Юрлать саркайăк ывăнмасăр,
Мухтав чăваш саркайăкне!

*Валери ТУКТАР*

Шамиль Бикчурин ячĕллĕ
преми лауреачĕ
Тутарстан, Лениногорск хули

24.12.2010

## ЧЕЧЕК ЕШЕРТĔР ЁМĔРЕХ

Эс сăвă-юрă лаççинче
Нумайранпа калем туптатăн,
Илем çинчен, телей çинчен
Ачаранпах хайлав хайлатăн.

Янрать юрру – «Ан ман, тăван»,
Тăван патне ĕçке кайсассăн,
Чунрах «Уçланкăри палан»–
Чĕр тунсăх чатăрне карсассăн.

Канма пĕлместĕн нихăçан,
Телей ĕçре кăна куратăн,
Ахах-мерченĕн ялкăшан,
Хĕл варринчех çеçке çуратăн.

Таçти тĕнчен кĕтессинче
Инçет çĕршывсенче эс пултăн,
Тăван чăвашăн чĕлхинчех
Вĕри кăвар хĕлхемĕ тупрăн.

Чечек ешертĕр ĕмĕрех,
Пыл хурчĕ савăнса сĕрлетĕр,
Çеçке çурсамччĕ чĕререх,
Тĕнче илем тĕрри тĕрлетĕр.

Çӳлтен çӳле çĕклет пире
Çĕрле хĕлхем сапан хунар,
Саркайăк пек Сементере
Сад пахчинче телей сунар!

ÇĔНĔ ШУПАШКАР
«Химпром» профкомĕн
библиотеки

1991

* * *

Сементер хули чаплă тееççĕ,
Вăл ăçта ларнине, ай, пĕлмеççĕ.
Сементер ăста сăвăç тееççĕ,
Ун çуралнă кунне, ай, пĕлмеççĕ.

Терек шывĕ енче ларнă теççĕ
Несĕлсен авалхи ват хули,
Сементер ятлă çын пулнă теççĕ,
Никĕс янă тет унăн алли...

Çавăнта яш хăмла вăрă сапнă,
Атăл тăрăх ишсе тăвалла
Чăваша вырăнтан вăл хускатнă,
Çĕн çĕре илнĕ çирĕп алла...

Сементер săввисем шăранаççĕ,
Чун туять: ӳлĕмрен çакăнта
Сементер ялĕсем те пулаççĕ
Яш хăмла ашкăран вырăнта.

*Журналсен профкомĕ*

02.01.1990

# ÇĔНĔ ÇУЛХИ ТАВ САМАХĔ

*Юрий СЕМЕНТЕРЕ*

Эс çыракан шур хут çине
Шур акăш антăр тӳперен,
Ташлатăр савăк ташшине
Чечек сарса йĕркен-йĕркен.

Çӳлтен ахах-мерчен сапса
Çут çăлтăр тăтăр савăнса,
Сан ырă шухăшна туйса
Çĕн кун йăл култăр ыр сунса.

Хуллен «Уçланкăри палан»
Янратăр-и симфони пек,
Сан умăнта, поэт, ялан
Вылятăр çынлăхлă кĕрнек.

***Микулай МĂСКАЛ***

02.01.2011

# ПАЛАНСЕМ

## I

Эп куртăм Атăл хĕрринче палан,
Вăл çӳллĕ сăрт çинчен пăхса ларатчĕ.
Хĕм сапакан рубин шăрçапалан
Мăн Атăл хĕрĕ евĕр курăнатчĕ.

Илемлĕ пилĕк, йăрăс кĕлетке,
Епле ăна ăнланмăн та юратмăн,
Кĕрхи çиле чăтан кĕрнеклĕхе
Хитре сăмахпала мĕнле мухтамăн.

Палан юрри хайланă Сементер
Çав тĕм патне хуллен утса пырсассăн
Ытарайми ахах шăрçаллă хĕр
Ăна пуç тайрĕ тăванла хавассăн.

## II

Инçе эс кунтан, Хурамал Этелек...
Анчах чăваш ялĕ унта та тӳлек.

Тӳп-тӳрĕ утсан Шупашкар хулинчен,
Пулать ултçĕр çухрăм унта çитиччен.

Пурнать Карлин вăйăç çав ял варринче,
Ӳсет ик палан ун хитре пахчинче.

Çав икĕ паланăн та пур ячĕсем,
Пĕлеççĕ çакна Хурамал çыннисем.

Пĕрийĕ Лукин-мĕн, тепри-Сементер,
Кала, Карлин вăйăç, пире ĕнентер...

Иккен, Самарпа Шупашкар хушшисем
Час-час ăсатаççĕ палан хĕмĕсем...

## III

Эй, çынсем,
    пĕр-пĕрне ан çухатăр,
    инçете çывăхлатăр,
        теççĕ пире палансем.

Тăвансем,
    кăмăла хирĕç кăмăл,
    хăмăла хирĕç хăмăл,
        теççĕ пире палансем.

Савнисем,
    сив çил вĕрнĕ самантăр
    чунăра ан аманттăр,
        теççĕ пире палансем.

*Микулай МĂСКАЛ*

10.10.2009

Çывăх юлташа, чăваш халăх поэтне
Юрий Семенович Сементере çуралнăранпа
70 çул тултарнă ятпа саламласа

**ЮРИЙ** нихăçан шăттармасть ка**Ю**
**Р**аççейра сахал унашкал хаста**Р**
**И**лтмен çын та çук – халăх çыравç**И**
**Й**ывăра пырать çĕнтерсе **ЮРИЙ**

**СЕМЕНТЕРЕ** эп шутлап çывăх ту**С**
**Е**пле савăнап пулсассăн пĕрл**Е**
**М**ухтаса кăна калаççĕ çынсе**М**
**Е** сăвă çыран, е çĕн кĕнек**Е**
**Н**умай тăрăшан, ăс – тăнпа пуя**Н**
**Т**ăван халăха паратăн çуна**Т**
**Е** юрă юрлан, сассу пит хитр**Е**
**Р**аиса çумри шанчăклă мăшă**Р**
**Е**пле хисеплет вăл **СЕМЕНТЕРЕ**

**САЛАМЛАСА** ман халĕ мĕн кала**С**
**А**нлă çулпала ут малтан мал**А**
**Л**айăххине çеç халаллать Хава**Л**
**А**лран – ал тытса, юнашар утс**А**
**М**ăшăрпа пĕрле утăр çумма – çу**М**
**Л**арса канма пĕл, пухăнтăр вăй-ха**Л**
**А**н ус аллуна йывăра пул**А**
**С**авăнса пурнас, юрлас та ташла**С**
**А**л парап чунтан эп **САЛАМЛАС**А

Кăмăлпа сывлăх сунса
***Георгий ХАВАЛ***
2011 çул
кăрлач уйăхĕн 2-мĕшĕ

## ЮРИЙ СЕМЕНОВИЧ!

Ҫӳлти хӗвел йӑл-йӑл кулать,
Ярать сиплӗ ӑшшине,
Уя-хире вӑл ыталать,
Ҫитет ешӗл ӗшнене.

Ҫав ӑшӑ пек, ҫав ырлӑх пек
Эпир чӑваш чӗлхине
Чун-чӗрепе илетпӗр тек
Хамӑр умри ҫул ҫине.

Тӑван поэт сӑввипеле
Утсассӑн ҫын ывӑнмасть,
Чӗрӗ сӑмах пилӗпеле
Усала та парӑнмасть.

Ҫав кӗтретӗн пархатарӗ
Уйрӑлминччӗ пирӗнтен,
Чӑвашсен таса кӑварӗ
Ан сиринччӗ хӑйӗнчен.

***Геронтий НИКИФОРОВ***
Г.С.Лебедев ячӗллӗ лицей

29.10.2010

Юрий СЕМЕНТЕРЕ

Пурнан та пурнăçсем юханшыв пек иккен,
Çав шыв çыранĕсем пĕр тикĕс мар.
Вашмаккипе чăнки ылмашăнать иккен,
Юхан шывне юхма ай çăмăл мар.

Çав юхан шыв юхать анаталла иккен,
Хăй тăрăх хăвалать кăтра хумсем.
Хура хумпа шурри юнашарах иккен,
Хумĕсемпе вылять авăрĕсем.

Авăрсемпе ишме вăйсем кирлех иккен,
Вăйпа пĕрле кирлех ишме пĕлни.
Ишме пĕлни кăна сахалтарах иккен,
Тата кирлех çумра юлташ пулни.

Юлташ çумра пулни çунат хушать иккен,
Юлташ чĕрин ăшши – çумри хĕвел!
Хĕрӳ хĕвелпеле телей килет иккен,
Ан чарăн, юхан шыв, юхса çĕнел!

*Николай КАРЛИН*

2003

# МАЙНЕ ПĔЛСЕ ВĔРЕТ-ШИ ÇИЛĔ?

*Юрий СЕМЕНТЕР*
*поэта сума суса*

Майне пĕлсе вĕрет-ши çилĕ,
Пĕлсе-ши, тен, хăй вăхăтне?
Çил пулмасан йăмра та вилĕ,
Хускатаймасть вăл туратне.

Курсассăн та хăш чух сисместпĕр
Мĕн пуррине çил пулмасан.
Çил вĕрнипе илемлĕ тетпĕр,
Чечексене те, пуç тайсан.

Çил сиввине туйса эс ӳсрĕн,
Авкаланмарăн ытлашши.
Кĕреш юман пекех эс тӳсрĕн,
Ялта вунпилĕк çул хушши.

Унтан сана та асăрхарĕç:
Эс çирĕп, чăтăмлă ача.
Алла çурла та хĕç тыттарчĕç,
Пуçна усмарăн эс пачах.

Ыр ĕçшĕн эсĕ хĕпĕртерĕн,
Çĕршывшăн тăтăн чикĕре.
Сăр шинельпе чылай çӳрерĕн
Сăваплă, чыслă хĕсметре.

Çартан килсен эс ыталарăн
Чăваш йăмрисене савса.
Шăпчăк юррисене тăнларăн,
Вĕсем пек сăвă каласа.

Эс пысăк çын, эс халĕ паттăр,
Эс тивĕç пысăк хисепе.
Санпа пур халăх савăнатпăр
Хавхаланса сăввусемпе.

***ШЕТМĔ МИХАЛИ***
1996 çул, кăрлачăн 9-мĕшĕ

# ЧĂВАШ ХАЛĂХ ПОЭТНЕ

Кун курнă эсĕ кăрлачра
Асар-писер вут хыпнă çул.
Ӳсейрĕн йывăр вăхăтра
Сĕтел çинче çăкăр çук чух.

Ачаш пулман ача чухне,
Тыр вырнă – ырнă аллусем.
Çĕр илемне, сăмах хакне
Эс туйнă – çырнă сăвăсем.

Сан малтанхи сăввусене
Райхаçата кĕртсеттĕмĕр.
«Сăвви – аван-çке» тенине
Вулакантан илтеттĕмĕр.

...Ку чух поэзи хирĕнче
Чун-чĕрене сапан кăвар.
Телейлĕ пултăн çĕр çинче,
Кӳретĕн пысăк пархатар.

Чĕлхемĕр хăвачĕпелен
Çунат эс сартăн тĕнчене.
Сăвву-юрру юхать хитрен,
Мухтав чăвашăн шăпчăкне.

Сисмерĕн çитрĕн утмăла.
ЯЛАВçă, сапăр Сементер.
Мĕнех вăл утмăл? Ут мала,
Талантупа тек киллентер!

*Лука СЕМЕНОВ*

02.01.2001

# УЯВ ЯЧĔПЕ

Хăнасем ик куç тулли,
Янăрать черкке ян-ян,
Тăвансен хавас кулли
Чĕрене лăпкать паян.

Пур кунта Çĕрпӳ, Канашĕ,
Килнĕ Шетмĕ хĕрринчен,
Эп те, Çармăс ен чăвашĕ,
Каçрăм Атăл леш енчен.

Тутарпа эп паллашатăп,
Калаçатăп пушкăртпа,
Сăрине хурап та шалттăм,
Саламлатăп юрăпа.

Ак министр, акă конюх,
Пурте уçă чунĕпе,
Юнашар – Исмай полковник
Йăлтăркка пакунĕпе.

Çак тăванлăхăн кĕперĕ
Ан кивелтĕрччĕ нихçан,
Пĕрлештер эс, Сементерĕм,
Юррупа пире ялан.

*Гервасий АРСЕНТЬЕВ*

Марий Эл, Звенигово хули

02.01.1996

# АНЧАХ ЭПИР ТЕ ÇАМРĂКЧĔ

*Юрий СЕМЕНТЕРЕ*

«Ача чухне Семеновчĕ,
халь эсĕ – Сементер!
Çырас ĕçпе ан йăлăхчĕ–
пурне те тĕлĕнтер!»

Çапла эп çырса панăччĕ
сан юбилей пулсан.
Эс аллăра та паллăччĕ,
халь – çӳлерех тăран.

Тухса сăмах каланăччĕ
пĕрле ӳсни çинчен.
Виçеллĕн пахаланăччĕ
сан талантна, пиччем.

Анчах эпир те çамрăкчĕ,
халь – аллă пиллĕкре.
Туррийĕ телей патăрччĕ,
телей вăл – пиллĕхре!

Татах хавхалантар пире
çĕн сăвă-юрăпа–
Кирек хăçан Сементере
асилччĕр ырăпа!

***Николай ЕРШОВ-ЯНГЕР***

Нестер Янгас ячĕллĕ
преми лауреачĕ, 1996

## СЕМЕНТЕР ÇУЛĔ

Ункăн çулĕ – юхасси,
Çавала ал парасси,
Çавалпала пĕрлешсен
Атăлпа паллашасси.

Çавăн пекех Сементер
Хăй умне хывса кĕпер
Тухрĕ пирĕн тăрăхран,
Çитрĕ хулана чипер.

Хусанкая ал пачĕ,
Ухсай çумне çывхарчĕ,
Вĕсем пиллĕх панипе
Ылттăн калем туянчĕ.

Калем мĕскер тăвать тет?
Калем хăех çырать тет.
Сементер вăл çырнине
Тытса кăна пырать тет.

Лукин кĕвĕ çурататать,
Сементер сăвă шăратать.
Уçланкăри паланĕ
Авăнса пуçне таять.

***Николай УНКАЙ***

Чатукасси ялĕ, 2009

## ЮРИЙ СЕМЕНТЕРЕ
55 çул тултарнă май

Чун-чĕрере вĕрет поэзи
Тапсах туртан тулли лава.
Поэзире яту çĕкленчĕ
Сана кăларчĕ мухтава.

Куллен çĕн йĕркесен сипечĕ
Сĕткен парать вăл вăй-хала
Ватти те çамрăкки иленчĕ
Вуласшăн санăн хайлава.

Поэзире хăвна туптарăн
Поэт та тимĕрçĕ пулса.
«Уçланкăри палан», мăнтарăн,
Тĕнче тăрăх çӳрет юхса.

Сан сăввусен мĕн чухлĕ тантăш,
Сан сăввусемшĕн эп тăван.
Çутта тухать санпа, ав, Танăш,
Хăпартланать вăл санпалан.

Ан ватăл, Сементер тăванăм,
Куллу вылятăр сăн-питре,
Кăçал 55 çул тултартăн,
Ялан эс пул вунçиччĕре.

«Ял пурнăçĕ» хаçат
редакцийĕнчи ĕçтешсен ячĕпе
***Георгий ТУСЛИ***

Кăрлач уйăхĕн 19-мĕшĕ

1996

## Ю.СЕМЕНТЕРЕ
## А.И.Герцен çырнисен пуххине парнеленĕ май

Ку пултăр çĕнĕ пӳрт парни,
Ан татăл эс кĕнекерен.
Том хыççăн томăн ху çырни
Тухсах-и тăтăр çулсерен.

Сăвă кĕлечĕн сар пӳлми
Ан хухтăр санăн нихăçан.
Поэзи сачĕсен улми
Кайма ан пĕлтĕр алăран.

Кил-çуртăнта хĕвел ялтратăр,
Ан пултăр пĕлĕтлĕ çанталăк,
Шур хут çинче йĕрке ташлатăр,
Туссемшĕн уçă пултăр алăк.

*Георгий ЕФИМОВ*
Шупашкар

23.08.1975
Çырнисен пуххин
1-мĕш томĕнчен

# УТМĂЛ ÇУЛ, ТĂВАНĂМ, НУМАЙ МАР...

Утмăл çул, тăванăм, нумай мар,
Вăл вăй питти те ырă вăхăт тетĕп.
Туссем-йышсем пулсассăн юнашар
Илем кĕрсе пырать хуллен ăша,
Куçран пăхса тăрать чыспа хисеп те.

«Уçланкăри палан» юрланă май
Хăш чух вăрттăн шăлсан та куççуле,
Эпир манман тĕллев патне утма,
Чип-чипер çитнĕ çитмелли тĕле.

Çĕр пин кĕвве эс хăв ăшна илсе
Çĕр пин сăмахлă сăвăсем шăратнă.
Чăваш тĕрри,
Чуна килентерсе,
Халăх умне яваплăхпа тăратнă.

Чăн-чăн поэт пулмашкăн питĕ хĕн:
Унра –
Ăсталăх,
Чун,
Таса хăват.
Пĕлеп: литература – Пысăк Тĕн–
Турри те ху, шуйттанĕ те хăвах.

Çавах та утмăл çул нумаях мар.
Ĕçлессисем мĕн чухлĕ сан умра?!
Кӳр аллуна, килĕштерсе утар!...
Эс Сементер вĕт!
Эс – малашлăхра!

*Георгий ЕФИМОВ*

03.01.2000

# ЯТУ ЮЛĔ ХАЛĂХРА

*Хамăр ентеше – Юрий*
*Сементер сăвăçа чысласа*

Шетмĕ шывĕ хĕрринче
Эс çуралнă ял ларать.
Аслă ялăн варринче
Сирĕн килĕр палăрать.

Çакă ăшă кил-çуртра
Тĕреклентĕн яшлăхра.
Сан пекки çук таврара–
Яту юлĕ халăхра.

Савăнатпăр санпала–
Хамăр сăвăçăпала.
Çивĕччĕн пыр малалла,
Чĕлпĕр çирĕп тыт алла.

Пурнăç тума çăмăл мар–
Атăл урлă каçни мар.
Яланах эс маттур пул,
Эп сунап вăрăм кун-çул.

***Гурий ДУБРОВ***

Красноармейски ялĕ
Раштав уйăхĕн 4-мĕш кунĕ

1998

## ЮРИЙ СЕМЕНТЕРЕ

Сементере юратса,
Кӑмӑл туса, ыр сунса,
Чысламашкӑн килтӗмӗр,
Ҫак кермене кӗтӗмӗр.

Тӑвансемпе, туссемпе,
Хастар, ырӑ ҫынсемпе,
Сума сӑвар ентеше,
Пархатарлӑ пӗлӗше.

Ачасемшӗн те поэт,
Мӑннисемшӗн те поэт,–
Чӑн-чӑн халӑх юрӑҫи,
Кӑмӑлтан савать пур ҫын.

Ӗмӗр пул эс – урхамах,
Ватлӑх – саншӑн мар сӑмах.
Пурӑн ҫеҫ ши! шӑхӑрса,
Вут-кӑварлӑн йӑлкӑшса.

Вӗҫсӗр-хӗрсӗр ӗҫ умра,
Е ялта, е хулара.
Епле пыран ӗлкӗрсе,–
Чӑн, яран тӗлӗнтерсе.

Такӑр чуптӑр сан ҫулу,
Вӑрӑм пултӑр кун-ҫулу.
Пархатарлӑ Сементер,
Ӗмӗр чуна ҫӗклентер!

***Валентина РУДНИКОВА***

1996

# СĂВĂÇ

Систермесĕр килнĕ çумăр сăлтавне
Е самантлăх çиçнĕ çиçĕм тымарне
Меллĕн асăрхать вăл, чĕрипе туять,
Евĕклĕх таланчĕ мăкăнь пек çурлать.

Нĕрлĕх çулĕ-йĕрĕ, несĕл ĕренки,
Тăвăллăх çăлкуçĕ, çĕнтерӳ йĕрки,
Елехей уявлăх, хĕлĕх ян кайни–
Ретĕн эрешленнĕ çут тĕнче парни.

***ИЛКЕР ЮКУРĔ***
Муркаш районĕ
Тăмкасси ялĕ
1992

## СУЯ ХЫПАР

Кӑвак ҫутӑллах хыпарларӗ
Шап-шурӑ пас тытнӑ эфир:
«Сементер те ал пиллӗк тултарӗ...»
Анчах ӗненместпӗр эпир.

Ӑна аллӑ пиллӗк кам парӗ?
Пӑхма вӑл халь пӗр хӗрӗхре,
Ҫарти офицер пархатарӗ
Вылять яш сӑнра та питре.

Ҫук, ҫук, эфира ӗненместӗп,
Ал пилӗк тени вӑл-суя,
Ав, ман сӑмаха ҫирӗплетӗ
Шӑн кантӑк ҫинчи кӑсӑя.

Сехечӗ пӗр тӑххӑр ҫапсассӑн
Каятӑп эфир кантурне,
Халь-халь кӑкӑртан чӑмӑртассӑн
Ятлатӑп Микиш Павӑлне:

Мӗскершӗн ал пиллӗк параҫҫӗ
Ҫав хӗрӗхсенчи ачана?
Суяшӑн явап тыттараҫҫӗ,
Ку радио мар, шур чана!

Ҫапах, кантура утнӑҫемӗн
Илем те хитре уҫ ҫыру
Ярса хӑварам Сементерӗн
Тулли ещӗкне...Тен, тӑрук...

*Георгий ОРЛОВ*

01.01.1996

# ХАЛĂХ ХИСЕПЛЕКЕН ПОЭТА

Кулачсем çисех ӳсмерĕн пуль,
Пыл та çу тĕлне пĕлмерĕн пуль,–
Вăрçă çирĕ санăн кулачна,
Вăрçă илчĕ сан пылпа çуна.

Пăрпа çийĕнетчĕ çăпату,
Шывпа исленетчĕ çăпату,
Сивĕ тăм илетчĕ хăлхуна,
Шартлами шăнтатчĕ аллуна...

Юр та çумăр витĕрех тухса,
Ачаран ĕç çумĕнче пулса
Тытрăн аллуна эс кăранташ,
Алă пачĕ ăнланса янташ.

Тыткăнларĕ Иванов сасси,
Тыткăнларĕ Хусанкай сасси,
Кĕрсе кайрăн вĕсен пахчине,
Чыс та хисеп Танăш ачине!

*Нина Даниловна АНДРЕЕВА*

02.01.2001

# ТАВ СĂМАХĔ

Мĕнле вĕренем-ши юрлама,
Чаплă сăвăçсене мухтама?

Хамăр хӳхĕм палăк лартмасан
Кам-ха мухтĕ чăваша кайран?

Эпĕ Москаленко маршăла
Шанчăклăн турттартăм вăрçăра.

Хĕсметрен киле килес чухне
Пачĕ вăл мана паха парне.

Сăмахне тытать чăваш тени,
Хăй чысне упра пĕлекенни.

Сементер те çавăн пек чăваш,
Салтакри пек шанчăклă юлташ.

Эп, Муркаш çынни, халь ветеран,
Унăн юррине юрлап чунтан.

***Николай МИХАЙЛОВ***

17.07.2003

# ПАЛЛАНӐ ПОЭТА

Сементер, Сементер,
Эпир курнӑ сӑвӑҫӑ,
Сементер, Сементер,
Хамӑр ентеш сӑвӑҫӑ.

Эпир Сире юрататпӑр,
Чун-чӗререн ыр сунатпӑр,
Сӑввӑрсене вуласа
Ӳнер асамне туятпӑр,
Юррӑрсене юрласа
Пурнӑҫ илемне куратпӑр.

Пурӑнӑр ҫӗр ҫул таран,
Кун хитре эсир пулсан.

*Алена СЕМЕНОВА*
Тракри чӑвашла-нимӗҫле гимнази

2006

## Ю.СЕМЕНТЕР ЕНТЕШЁМЕ

Эс – тӳпери маттур тӑри,
Сан сӑввупа сывлать тӗнче,
Пин-пин хитре чӑваш юрри
Ачаш ҫилпе юхать инҫе.

Туяҫҫӗ сӑввусен пилне
Патӑрьелсем те Тивӗшсем,
Питрав чухне чиркӳ тӗлне
Шӑваҫҫӗ пирӗн тивӗҫсем.

Мӑнаҫлӑ Атӑл шавӗнче
Илтетӗп хӗлӗх сассуна,
Ҫурхи хӗвел пайӑркинче
Куратӑп ырӑ куллуна.

*Маргарита ГУРЬЕВА*
Ҫӗрпӳ районӗ
Тивӗш ялӗ
09.04.2010

# ÇEÇПĔЛ КĂМĂЛĔ

Сементерĕм,
сĕвентерĕр
вăй-хал çук чухне,
Эсĕ илтнĕ те
пĕлнех-тĕр
эпĕ вилнине?

Сементерĕм,
халăм çуккă,
пăтранать тĕнче,
тăнсăр çын та
нĕрсĕр шухă
сăвăç хушшинче.

Сементерĕм,
тен, сисет-тĕр
сан чун тараси:
чăвашсен
хăçан пĕтет-ши
хăйне кăшласси?

Мĕн мана
пĕтерчĕ, хуçрĕ,
мĕн аркатрĕ-ши?
Курайман
ентеш тулларĕ,
кĕвĕçӳ хĕççи.

Ертсе кай
мана тархасшăн
кукамай ялне,
сиплĕ шывлă,
ват йăмраллă
Чуракассине.

Шупашкарти
**6-мĕш вăтам шкул**
16.11.1992

# АЛШӐЛЛИЕ АН ВАРАЛӐР

Аннеҫӗм мана алшӑлли парнеленӗччӗ
Килес кун-ҫулу чыслӑ пултӑр тесе,
Аннеҫӗм мана алшӑлли парнеленӗччӗ
Шӑпу ӗмӗрех шурӑ пултӑр тесе.

Сукмак йӗррипе эп ялтан тухса кайрӑм
Мӑн ҫул юпине ыталас шухӑшпа,
Ҫитсе ыталарӑм, сӑваплӑн пуҫ тайрӑм,
Калаҫрӑм ларса анӑҫпа, тухӑҫпа.

Ах, хӑш самантра-ши ман тимлӗх ҫухалчӗ–
Майри алшӑлли ӳкрӗ пылчӑк ҫине,
Пулса юлтӑм эп ӑраскалсӑр шӑркалчӑ,
Кунта халь шутлап кӑвак кирпӗч шутне.

Каҫарччӗ мана, ырӑ суннӑ аннеҫӗм,
Юри пӑрахмарӑм шӑпа парнине,
Чӑн-чӑн ывӑлсем амӑшне хӗрхенеҫҫӗ,
Манмаҫҫӗ нихҫан та ун ырӑ пилне.

Ыйтап каҫару Сементер сӑвӑҫран та,
Эп ун ячӗпе тухрӑм ирӗк ҫула,
Халь ак тӗрмере тӗшӗлеп эсперанто,
Шырап ҫӗн сукмак кӗркунне те ҫулла.

Сире тархаслап, шӑллӑмсем-йӑмӑксемӗр,
Ҫӗн ҫул юппинче асӑрханӑр ялан,
Ҫумри алшӑлли чыслӑхне ан ӳкерӗр,
Ҫуса тасатма питӗ йывӑр кайран.

***Юрий АНДРЕЕВ***
Киров облаҫӗ
Юсанмалли колони
1984

# ЭКСПРОМТ СЕМЕНДЕРУ

Объездивший, как минимум, полсвета,
Со многими народами знаком,
Я с трепетом вхожу в прекрасный дом
Прекрасного чувашского поэта.

А в нем душа моя, теплом согрета,
Сердечным, удивительным теплом,
Оттаяла и расцвела цветком
Как дивные стихи лауреата.

Я сутки был здесь, мог бы и года,
А сердце не забудет то, как мило
Таинственной улыбкою светила,
Не обещая ничего, звезда.

***Анатолий ПАРПАРА***
лауреат Гос.премии
РСФСР им. М.Горького
г.Чебоксары

24.09.2005
17-30–17-40 час.

## ЮРИЮ СЕМЕНДЕРУ

Бывает в этой жизни прав,
Кто грозно кулаками машет.
Но снова видится «ЯЛАВ»,
Эпохой целой в жизни ставший.

Высокой ясности пример
Веселой шуткой, ироничный
Встречал нас Юрий Семендер,
Смеющийся и симпатичный.

Он был там прост и в доску наш,
Хоть главный, но доступен явно,
И шла я на восьмой этаж
Забыв, что нас встречает главный.

И так случалось много лет:
Когда к нему приходят люди.
Сиял улыбкою поэт,
И пусть же так и дальше будет!

Познав и радость, и беду,
Он в жизни не поддался грусти,
И я его переведу
Опять с чувашского на русский!

*Людмила СИМОНОВА*

28.03.2008

## ДРУГУ СЕМЕНДЕРУ

В век новый открывая дверь,
Друг и коллега Семендер,
Друзей с прошедшим веком сверь
И в новом в их надежность верь.

Пусть Чувашия расцветает,
Благополучье наступает,
За что должны мы встать горой,
Не зная устали порой.

Пусть крепнет наш язык родной
И вознесется над страной.
Поэт, мой близкий Семендер,
Такое будет, ты мне верь.

***Василий ДАВЫДОВ–АНАТРИ***

26.02.2007

# ПЕРШАИ

*Юрию СЕМЕНДЕРУ*

Першаи, Першаи,
Тут лихие шли бои,
Гром гремел здесь беспрестанно,–
Воевали партизаны.
Першаи, Першаи,
Сердцу близкие мои,
Партизанские отряды,
Их отважные засады...
Эти жаркие бои
В нашу летопись вошли.
Поредевшая пехота,
Где полком служила рота,
Пулемет на колесе,
То зенитка, знали все,
Самодельный миномет
В цель искусно с места бьет.
Першаи, Першаи,
Будто слышу я шаги
Замечательных ребят,
Что в земле сырой лежат.
Спят они тревожным сном,
Першаи – их вечный дом.
Видно, только старики
Ныне помнят их деньки,
Трактора кругом гудят,
Не разбудят тех ребят,
А першайские девчата
Не станцуют с ними рядом...
Першаи, Першаи,
Сердцу близкие мои.

***Ефим САДОВСКИЙ***
Минск

1990

* * *

Благословенна будь, земля,
Що родить щедро добрий люд!
Серця, у Волзи скупані, люблю,
Тепло іх чую звіддалля.

Я хочу, щоб не од біди
Тікав сюди, у край озер...
Налий же чистоі води
Мені, товарищ Семендер.

Не ніч, не дві я ночував
У цій хатине. Так здалось,
Що вік минув, і я – чуваш...
Вурманкасси – мое село.

***Николай***
***Владимирович БРОВЧЕНКО***
Зять П.Чичканова
Киев

21.08.1986

# ЙЁПЛЕВ-ШӐ̆ТЛЕВ

* * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * * *

* * *

Асӑмран тухайми Сементерӗм,
Салама сан ятпа кӗвӗлерӗм:
Эс çилрен çӗнӗ туйӑм вӑрат,
Туйӑмран çӗнӗ юрӑ шӑрат.

***Герман ТАНЛЕ***

Шупашкар районӗ, Шӑмӑш ялӗ
(Данилов Герман Андреевич)
02.01.2010

* * *

Сӑвӑ çырать Сементер,
Айӗнче – çемçе минтер.
Ытах сӑвви тухмасан
Кутран тап та сирпӗнтер.

***Аркадий ЭСХЕЛЬ***
1979

Сементерсем!

Ан иксӗлтӗр çӑкӑр-тӑварӑр!
Мана валли те кӑшт хӑварӑр!

***Геннадий АЙХИ***
15.11.1996, ирхине

* * *

Калӑн, чаплӑ тиечук,
Сементер доклад тӑвать.
Чӗлхинче пӗр çӳп те çук,
Çӑлкуç пек шӑнкӑртатать.

***Георгий ЯКОВЛЕВ***
«Капкӑн» художникӗ, 2003

* * *

АРçури кăтăкласа вĕлерет,
Сементер мухтаса вĕлерет.
Çаксене йалт чăтнă майăн
Ăçта кайса кĕрес Исмайăн?

***ИСМАЙ***
06.10.1997

* * *

Ăсан тытрăм пĕр мăшăр,
Пурнаççĕ кăшăр-кăшăр.
Аçине Сементере парас–
Ами юлать хурланса,
Амине Сементере парас–
Аçи юлать хурланса.
Сементере парас пуль
Пĕр пăтавкка мунча чуль.

***Ăсан УÇĂПĔ***
10.02.1998

* * *

Çӳремет уçланкинчи палан
Сементер енне пăхать паян.
Тен, пиччем, пырар та ун патне,
Тутанса пăхар пуль çырлине?

***Николай ИШЕНТЕЙ***
Тури Шурçырма ялĕ, 2002

## АВТОШАРЖ

Пур çĕре те йăрккан тесе ан çиллентер,–
Халĕ хăй пахчине çеç çӳрет Сементер.

08.07.2009

* * *

Хусанкай ялне те çитрĕмĕр,
Тури Вылсенче çӳрерĕмĕр.
Ĕрехмет, тăванăм, ĕрехмет;
Упрайинччĕ Ырă Киремет!

*Вера КУЗЬМИНА*
01.04.2002

* * *

Ман арăм вулать Сементер сăввине,
Куççулĕ юхать шурă пичĕ çине.
Поэт чунĕнчи вĕри çиçĕм хăвачĕ
Çапла пăчăртатать вулакан чĕрине.

Чăваш халăх художникĕ
***Николай***
***Аристархович***
***ЕНИЛИН***

2010 çул, юпа уйăхĕ

# ЮРИЙ СЕМЕНТЕРЕ

(50 çул тултарнипе)
Шӳт майлă

Çитет сана, юлташăм Юра,
Сăвва тек юрату хывма.
Салтакĕ те юрларĕ юрă–
Шеп вăхăт пакунна хывма.

Çулсем урăххине хистеççĕ,
Ыйтать çĕн кĕвĕ самани.
Унтах ав критиксем хĕсеççĕ,
Тем мар кив çемĕ тамални.

Яш-кĕрĕм сансăрах юраттăр,
Хăй çыртăр юрату сăвви.
Халь халăхшăн чуну ыраттăр,
Чан çаптăр ырату кĕвви.

*Михаил СТАВСКИЙ*

31.01.1991

* * *

Пусть век грозит огнем и бурей,
Мы будем к новым дням грести.
Слагай стихи, Семенов Юрий,
Чтоб я их мог перевести.

*Виктор КОЧЕТКОВ*
Москва
14 декабря 1986 г.

* * *

Надпись на книге
«О вкусах не спорят»,
вышедшей в библиотеке
«Крокодила»:

Ты меня по Чебок-царь-граду
Водил? Водил.
Вот тебе за это в награду
«КРОКОДИЛ».

*Петр ГРАДОВ*
Москва
21.05.1990

* * *

Когда я дал от семьи деру–
По Волге прибыл к Семендеру
И заливал я дружбу личную,
Глотая вместе с ним «Столичную».

*Анатолий ПАРПАРА*
Москва
19 августа 1988

* * *

Мне словом, делом и культурой
Ужасно хочется быть Юрой,
Зато мой друг мне не Семен,
Всегда собой бывает он.

*Семен НИКОЛАЕВ*
Йошкар-Ола
4 июня 1988

* * *

Когда мой друг стал Семендером,
Я тоже буду Титендером!

*Семен Титович РУФОВ*
Якутск
1990

* * *

В Дагестанской Хазарии
Есть станица Семендер,
А в далеком Шупашкаре
Друг есть – Юрий Семендер.

*Адам АДАМОВ*
лакский поэт
г.Махачкала, 1985

* * *

А годы мчат нас
к старости галопом,
Но жизнь мы с вами
прожили не зря.
Нам доставляют радость
наши тропы–
По ним идут надежно
сыновья.

*Александр ЛУКАШИН*
2001

* * *

Средь наших двух
Всегда прекрасных дач
Придут к Вам много
Творческих удач!

***Владимир КРЫСИН***
журналист и садовод
24.08.2009

* * *

Живи без бед,
Наш добрый Дед.
Чăвашла çыр. Лайăх çыр.
Пирĕн пата пыр.

Внуки:
***Чернобылец Оля.***
***Киселев Иван.***
***Баклушин Костя.***

30 января 2006

## НАШИ ПОЖЕЛАНИЯ:

**С**частья, радости, любви –
хотим Вам пожелать,
**Е**ще мы пожелаем Вам –
надежды не терять.
**М**ы так хотим, чтоб Вы
прожили много-много лет,
**Е**ще чтоб сочиняли Вы –
любимый наш поэт.
**Н**ам очень хочется, как Вы,
таким поэтом стать.
**Т**аких же книг, как и у Вас,
нам хочется создать.
**Е**ще раз пожелаем Вам
богатых, долгих лет,
**Р**одной, незабываемый –
наш дорогой поэт!

*От учащихся Чебоксарского профессионального лицея №12.*

*Руководитель:* ***Любимова Г.И.***

ТУПМАЛЛИ

Стр.
Юрий Семенович Сементер (кĕске биографи)........................................4
Умсăмах вырăнне..........................................................................................5
Çитмĕл çул тултарнă ятпа саламланисенчен............................................6
Юрий Сементере *Порфирий Афанасьев*......................................................9
Поэт чĕри *Валери Туркай*...............................................................................10
«Ĕнер кăна эп сăвă çыраймастăм» *Валери Туркай*............................11
Çĕн ĕмĕре пĕрле кĕрер *Ваçлей Давыдов-Анатри*.................................12
Юлташăм! *Иван Аршинов*............................................................................13
«Вĕсен – хваттерĕнче те халăх» *Сергей Саманташ*............................14
Сементер! *Александр Галкин*........................................................................15
Парне *Анатолий Такан*......................................................................................16
«Чи йывăр чух кăна туйма пуçлатăн» *Василий Энтип*......................17
Пĕлес пулсан *Светлана Асамат*.................................................................18
Çĕнĕ çул саламĕ *Анатолий Юман*..........................................................21
Саламсем *Константин Петров*....................................................................22
Шупашкара килтĕмĕр *Асхаль Ахмет-хуçа*............................................23
Тавах! *Ибрагим*....................................................................................................24
Тусай ялĕнче *В.Я.Ефимова*...........................................................................25
Юрий Сементере *Г.Юмарт*............................................................................26
«Пулмасассăн санăн пахчунта» *Георгий Ефимов*................................28
Хĕллехи салам *Валериан Ашкеров*.........................................................29
Çĕклентер те хĕмлентер *Аркадий Казанов*...........................................30
Сементер каçĕнчи алаверди *Афиноген Кузьмин*..................................31
Çĕршыв ачи *Николай Теветкел*..................................................................33
Танăш ялĕ тĕлĕнче *Роберт Миннуллин*...................................................36
Эсĕ çутрăн çутă çăлтăр *Юрий Вирьял*.......................................................38
«Кармашăн-и е ăнтăлăн» *Борис Романов*...............................................39
«Каллех пакун çакасчĕ, ыр тетеçĕм» *Анатолий Ыхра*........................40
Юрлать саркайăк пĕр канмасăр *Валери Туктар*...................................41
Чечек ешертĕр ĕмĕрех *«Химпром» профкомĕн библиотеки*..................42
«Сементер хули чаплă тееççĕ» *Журналсен профкомĕ*.......................43
Çĕнĕ çулхи тав сăмахĕ *Микулай Мăскал*.................................................44
Палансем *Микулай Мăскал*..............................................................................45
«Юрий нихăçан шăттармасть каю» *Георгий Хавал*.............................47
Юрий Семенович! *Геронтий Никифоров*....................................................48
Юрий Сементере *Николай Карлин*...............................................................49
Майне пĕлсе вĕрет-ши çилĕ? *Шетмĕ Михали*........................................50
Чăваш халăх поэтне *Лука Семенов*..........................................................51
Уяв ячĕпе *Гервасий Арсентьев*....................................................................52
Анчах эпир те çамрăкчĕ *Николай Ершов-Янгер*....................................53
Сементер çулĕ *Николай Ункай*.....................................................................54
Юрий Сементере *Георгий Тусли*.................................................................55

Ю.Сементере *Георгий Ефимов*......................................................................56
«Утмăл çул, тăванăм, нумай мар...» *Георгий Ефимов*..........................57
Яту юлĕ халăхра *Гурий Дубров*....................................................................58
Юрий Сементере *Валентина Рудникова*....................................................59
Сăвăç *Илкер Юкурĕ*..........................................................................................60
Суя хыпар *Георгий Орлов*...............................................................................61
Халăх хисеплекен поэта *Нина Даниловна Андреева*...............................62
Тав сăмахĕ *Николай Михайлов*......................................................................63
Палланă поэта *Алена Семенова*....................................................................64
Ю.Сементер ентешĕме *Маргарита Гурьева*..............................................65
Çеçпĕл кăмăлĕ *Шупашкарти 6-мĕш вăтам шкул*...................................66
Алшăллие ан варалăр *Юрий Андреев*........................................................67
Экспромт Семендеру *Анатолий Парпара*................................................68
Юрию Семендеру *Людмила Симонова*.....................................................69
Другу Семендеру *Василий Давыдов-Анатри*...........................................70
Першаи *Ефим Садовский*................................................................................71
«Благословенна будь, земля» *Н.В. Бровченко*.........................................72
Йĕплев-шӳтлев *Тĕрлĕ авторсем*....................................................................73
НАШИ ПОЖЕЛАНИЯ *Любимова Г.И.*.....................................................80

СТИХОТВОРНЫЕ
посвящения
народному поэту Чувашии
**Юрию СЕМЕНДЕРУ**

Стихи
на чувашском языке

Составитель – **Мигулай Мъскал**
(Николай Григорьевич Иванов)

Редактор – *Геронтий Лукиянович Никифоров*
Оформление *Н.Г.Ивановой*
Дизайн обложки *Н.Л.Лукиной*

Подписано к печати 25.01.2011. Формат 60×84/16
Бумага офсетная. Печать оперативная.
Физ. печ. л. 5,25. Тираж 500 экз. Заказ № 28
Гарнитура Таймс

Отпечатано с готового оригинал-макета в типографии ИП Сорокина А.В. «Новое Время».
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел.: (8352) 41-27-98, 46-43-46. E-mail: newtime1@mail.ru

## *ШУРĂМПУÇ*

*Юрий ШЕПИЛОВ кĕвви*

*Алла-аллăн утрăмăр савнă тусăмпа*
*Шур пĕркенчĕк тăхăннă аслă урампа.*
*Шур çеçке пек çепĕççĕн пăхрĕ хăмăр куç,*
*Утрăмăр, сисмерĕмĕр – тухрĕ шурăмпуç.*

*Шурăмпуç, шурăмпуç, шурăмпуç*
*Кĕмĕл çутă сапать урама,*
*Шурăмпуç, шурăмпуç, шурăмпуç*
*Çулăмпа çунтарать чунăма.*

*Уй-хирте пĕр тикĕссĕн шăтнă хуратул,*
*Уй-хир пек ешертĕр-и пирĕн юрату,*
*Кĕмĕл çутă саптăр-и кĕмĕл шурăмпуç,*
*Умăмра хĕмлентĕр-и мăшăр хăмăр куç.*